27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АПРЕЛЬ
2
ВЫРСАРНИКУН
66 (6561) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ялхуçалăхĕнчи çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн!

Ĕнер пирĕн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç. Пирĕн колхоз хресченĕсем çак хисеплĕ ялава иртнĕ çулта фронта пулăшассишĕн вăй-хала шеллемесĕр ĕçленипе çĕнсе илчĕç. Çак хаклă награда республикăри пĕтĕм парторганизацине, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăхĕнчи специалистсене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене татах та лайăхрах ĕçлесе, 1944 çулта ялхуçалăх культурисен тухăçне ӳстерес тата колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатса ярас тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнӳсем тума хушать.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕ ВКП(б) Обкомĕн секретарĕн Чарыков юлташăн çуракине ирттересси тата 1944 çулта вăйлă тырпул туса илес ĕçре республикăри парти организацийĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен тунă докладне сӳтсе-яврĕ. Пленум СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановление пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе татăклă программа туса хатĕрлерĕ. Чăваш республикинчи большевиксен тивĕçĕ — çав решенисене пурнăçа кĕртессишĕн большевикла кĕрешме тытăнасси, çапла вара, республикăри ялхуçалăхне малалла аталантарса пымалла тăвасси пулать.

Партипе правительство колхозсемпе МТС-сем, совхозсем, çĕрĕç органĕсем тата партипе совет организацийĕсем умĕнче 1944 çулта тăракан тĕп задачăсем тырпул тухăçлăхне малалла ӳстерсе пырассине, тĕштырăсемпе ытти йышши ялхуçалăх продукчĕсем туса илессине ӳстерессине пулать тесе палăртса пачĕç. Çак задачăна анăçлăн пурнăçлас условисенчен пĕри — çуракине вăхăтра тата лайăх туса ирттересси пулать. Çавăнпа та ялти коммунистсемпе комсомолецсем, колхоз активĕн пĕтĕм вăйне çуракине хатĕрлес ĕçе тата ăна организациллĕн ирттерес ĕçе ертсе пымалла. Вĕсем çуракине хатĕрленес ĕçре тата ирттерес ĕçре тĕслĕх кăтартакансем пулмалла.

Парти Обкомĕн пленумĕ республикăра çуракине хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пынине палăртрĕ. Сĕнтĕрвăрри, Вăрнар, Çĕрпӳ, Шăхасан районĕсенче вăрлăхсене тасатас тата ялхуçалăх машинисене юсас ĕç хыçа юлса пырать. Шăмăршă, Пăрачкав, Куславкка, Çĕмĕрле, Йĕпреç, Канаш, Патăрьел, Чкаловски районĕсенче удобренисене пухас ĕç начар пырать. Пăрачкав, Улатăр, Куславкка районĕсенче МТС-сен тракторĕсене юсасси татах та вăраххăн пырать. Лашасене тата ялхуçалăх машинисене çуракине хатĕрлес ĕç, транспорт инвентарьне юсас ĕç çителĕксĕр. Ăнăçлăн ĕçлекен колхозсен опытне пĕтĕм колхозсене сарасси начар пырать.

Çуракине çитĕнӳллĕ хатĕрленни ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсенчен колхоз организацийĕсенчен нумай килет. Çуракине хатĕрленес ĕçре ирттерме ĕçне колхоз пĕрремĕш секретарĕсем ялхуçалăх ĕçне ертсе пымалла.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ парти организацийĕсене колхозсенче çуракине ирттерме хатĕрленес ĕçре ертсе пыма хушрĕ. Апрелĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр, çуркунне акмалли мĕнпур вăрлăхсене хывса çитермелле, вĕсене пĕтĕмпех тасатса, сортласа, акма юрăхлă туса хумалла. Çитмен вăрлăхсене сутăн е кивçен илессине анлăн сарса ямалла.

Республикăри МТС-сенчи мĕнпур тракторсен паркне, лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх машинисене, лаша кӳлмелли хатĕрсене тата транспорт инвентарьне çывăх кунсенчех юсаса йĕркене кĕртмелле. Машинăсемпе уйхир ĕçĕнче туллин усă курасси вĕсене лайăх пахалăхпа юсанинчен килет. Çавăнпа та юсанă машинăсене тĕплĕн тĕрĕслесе йышăнмалла, йышăннă чухне палăрнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтермелле. Чĕрĕ туртăм вăйне çураки валли хатĕрлесси çине уйрăмах хытă çаварăнса пăхмалла. Выльăх апачĕсен пĕтĕм ресурсĕсене мобилизацилес пулать, колхозсем хушшинче пĕр-пĕрне выльăх апачĕсем парса пулăшассине организацилемелле. Лашасене тата вăкăрсене лайăх апат çине канма тăратмалла. Пурнишĕн те паллă, кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарман пирки пирĕн лашасемпе тумалли ĕçсен хисепĕ чылаях пысăкланать. Çавăнпа та пирĕн çураки ĕçне майракаллă шултăра выльăхсене ытларах явăçтармалла.

Çуракине анăçлăн ирттересси ĕçе тĕрĕс планланинчен тата тĕрĕс организацилениинчен, ĕçпе туртăм вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухнинчен нумай килет. Тракторнăй бригадăсемпе уйхир ĕçĕсен бригадисем валли çураки вăхăтĕнчи ĕç планĕсене вăхăтра туса çирĕплетмелле, ĕçе звеносем тăрăх организацилессине анлăн сарса пымалла. Вăрçă кунĕсенче колхозсенчи ĕçĕн пысăк пайне хĕрарăмсем пурнăça кĕртеççĕ. Ку ĕнтĕ ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсене пур колхозсенче те ача яслисем тата площадкăсем тума, çапла вара, хĕрарăмсене ялхуçалăх ĕçĕсене хутшăнма лайăх майсем туса пама хушать.

Тухăçлă тырпул туса илессин агротехникăна çирĕплетмелле. Çавăнпа колхозсене агротехника мероприятийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе пулăшмалла, агротехника правилисене çирĕп пăхăнса ĕçлеме вĕрентмелле.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ предприятисене, ОРС-сене тата хула организацийĕсене колхозсене çуракине хатĕрленес ĕçре пулăшма хушрĕ. Çавăнпа пĕрле рабочисене служащисене, хайсен пахчисене пахча-çимĕçсем акма хатĕрленме пулăшмалла.

Пленум ВКП(б) райкомĕсене партилле-политикăлла ĕçе çуракине ирттерес ĕçпе çыхăнтарса пыма хушрĕ. Ялхуçалăх умне тăракан задачăсене анăçлăн пурнăçламалла тăвассишĕн колхоз организацийĕсен, МТС-сенчи коммунистсемпе комсомолецсен, МТС-семпе совхозсен работникĕсен пĕтĕм вăйне мобилизацилемелле.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ парти организацийĕсене СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановленине тĕп вырăна хума тата вăл постановление пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртме хушрĕ. Апрелĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр, çуркунне акмалли мĕнпур вăрлăхсене хывса çитермелле, вĕсене пĕтĕмпех тасатса, сортласа, акма юрăхлă туса хумалла. Çитмен вăрлăхсене сутăн е кивçен илессине анлăн сарса ямалла.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене халех туса çитерессипе, çураки ĕçĕсене анăçлăн ирттерессипе тата 1944 çулта вăйлă тырпул туса илесси пулать. Хĕрлĕ Çара ялхуçалăх продукчĕсем, промышленноçа чĕртаварсем ытларах та ытларах парса тăрар. Колхоз хирĕсенче вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлесе, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хамăр алăра сирĕппĕн тытса тăрар!

Çамрăксен звенинче

ВĂРНАР, апрелĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрманкасри «Самолет» колхозри комсомолка Анна Николаева юлташ ертсе пыракан бригадăра каличчен уйрăм звеносем пулман. Малта пыракан колхозсен примерне кура, кăçал унта вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен çамрăксен звенине организацилерĕ. Унта пĕтĕмпе 9 çамрăк. Вĕсене комсомолец Николай Кудряшов юлташ ертсе пырать. Звенона 4 гектăр çĕр уйăрса панă. Кăçал 2 гектар çине вир акаççĕ, 2 гектар çине çĕрулми лартаççĕ. Звено хăйĕн участокне 200 лав тислĕк кăларнă, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ чылай пухса хатĕрленĕ.

Çак кунсенче колхозра Хĕрлĕ Çар ССР Союзĕн государство чиккине тухнă ятпа митинг пулса иртрĕ. Митингра звено членĕсем Борисова, Малова, Данилова, Дубов тата ытти юлташсем те Хĕрлĕ Çар çĕнтерӳвĕсем çине ĕçпе ответлеме сунчĕç. Вĕсем çав участок çинче гектартан 50 центнер вир, 150 центнер çĕрулми туса илме сăмах пачĕç.

В. ШАХАЛОВ.

Вăйлă тырпулшăн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçлассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва тата анлăрах сарса пырар

Республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç

Ĕнер, Шупашкарта, Советсен Çуртĕн ларусем пулакан залĕнче, Чăваш АССР-не Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă ятпа, республикăри ялхуçалăхĕнче малта пыракансен слечĕ пулса иртрĕ.

Слета ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ ЧАРЫКОВ юлташ уçрĕ.

Слетăн хисеплĕ президиумне, тăвăллăн алă çупса, ВКП(б) Центральный Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюровне суйларĕç.

ССР Союзĕн Наркомземĕ ячĕпе слета СССР Наркомземĕн коллегийĕн членĕ КАЛПИН юлташ саламларĕ. Вăл Чăваш республикинчи ялхуçалăхĕнче тунă çитĕнӳсем çинчен каларĕ, çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме чĕнчĕ.

—ССР Союзĕн Наркомземĕ çакна çирĕп шанса тăрать, — тет Калпин юлташ. — Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем, ялхуçалăхĕнчи специалистсем, МТС-сен работникĕсем, çĕрĕç органĕсем тата Чăваш республикин руководителĕсем республикăна паян паракан Хĕрлĕ Ялава — Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне — хăйсен аллинче çирĕп тытса тăрĕç, аслă çулпуç тата полководец Сталин юлташ ялхуçалăхĕ умне лартнă ответлă задачăсене ăнăçлăн пурнăçлĕç.

Трибуна çине генерал-майор МАКАРОВ хăпарса тăрать. Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ Ялавне пирĕн земляк — Совет Союзĕн Геройĕ гварди ефрейторĕ Иван ПОЛЯКОВ пĕтĕм зал урлă йăтса пырать. Пĕтĕм зал тăвăллăн алă çупать.

Генерал-майор Макаров, Хĕрлĕ Çар красноармеецĕсем, сержанчĕсем, офицерĕсем тата генералĕсем ячĕпе, Чăваш республикинчи ĕççыннисене Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илнишĕн саламлать.

— Çакă пысăк награда, — тет Макаров юлташ, — Сире ĕçре çĕнтерӳсем тума хавхалантартăр, вăл Сире хамăрăн Тăван çĕршывăн вăрçă хăватне çирĕплетессишĕн эсир вăя шеллемесĕр ĕçлеме тивĕçлине аса илтерсе тăтăр. Ĕçре те, çапăçури гвардеецсем пекех, ывăнма пĕлмесĕр кĕрешĕр.

Генерал-майор Макаров хисеплĕ Ялава Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председательне МАТВЕЕВ юлташа парать. Матвеев юлташ чĕркуççи çине тăрса, ялавăн хăмач бархатне чуп тăвать.

Матвеев юлташ хăйĕн ответлă сăмахĕнче, республикăри ĕççыннисем ячĕпе, Центральный Комитетпа Совет правительствине тата аслă Сталина орденлă Чăваш республикĕнчи колхоз хресченĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем тата МТС работникĕсем ирсĕр тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкассишĕн колхоз уйхирĕсенче малашне те ывăнма пĕлмесĕр, вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлĕç тата Хĕрлĕ Ялава 1944 çулта та хăйсен аллинчех хăварассишĕн пĕтĕм вăя хурса тăрăшĕç, тесе шантарать.

Слет участникĕсене Çĕмĕрле районĕнчи Кĕçĕн Кăмаша ялĕнчи колхозник пулнăскер, Совет Союзĕн Геройĕ гварди ефрейтор Поляков юлташ саламларĕ.

Слетра Вăрнар райсовет исполкомĕн председателĕ ОСИПОВ, ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарĕ КАРАУШЕВ, Шăхасан МТС директорĕ КОНСТАНТИНОВ юлташсем тухса каларĕç.

Слет участникĕсем, пысăккăн хавасланса, Оборона Государственный Комитечĕн Председателĕ СТАЛИН юлташ патне тата СССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ КАЛИНИН юлташ патне саламлă çырусем яма йышăнаççĕ.

Чăваш республикинчи ялхуçалăхĕнче малта пыракансем—Оборонăн Государственный Комитечĕн Председательне СТАЛИН юлташа

ПИРĔН ХАКЛА УЧИТЕЛĔМĔР ТАТА ÇУЛПУÇĂМĂР!

1943 çулта вăйлă тырпул туса илнĕшĕн ССР Союзĕн Совнаркомĕ пирĕн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тунă çинчен эпир çав тери савăнса, çав тери çĕкленсе итлерĕмĕр.

Паян, çак хисеплĕ Ялава алла илнĕ чух, эпир Сире, Иосиф Виссарионович, çав тери хытă тав тăватпăр, чунтан чĕререн саламлатпăр.

Çак аслă наградăна эпир çапла ăнлантăмăр: вăл фронта пулăшас тĕлĕшпе эпир ăнăçлă ĕçленине çеç пĕлтермест, вăл тата пире, Сталин юлташ, тăшмана тĕппипех аркатса тăкмашкăн татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕннине пĕлтерет. Çак чĕнӳ пирĕн мĕнпур малашнехи ĕçре пирĕншĕн боевой лозунг пулса тăрĕ.

Çак чаплă минутра чăваш халăхĕн пĕтĕм пурнăçĕ пирĕн куç умне тухса тăрать. Октябрьти социализмлă аслă революци пирĕн прававсăрлăха пĕтерсе хурса, пирĕншĕн чăн-чăн телейлĕ пурнăç пуçласа ячĕ. Сталинла пятилеткăсем вăхăтĕнче, мирлĕ строительство çулĕсенче пирĕн орденлă республика çуркуннехи сад-пахчисем пек чечекленсе кайрĕ. Колхоз йĕрки пире пуян та культурăллă пурнăç туса пачĕ. Ленинпа Сталин партийĕ пире телейлĕ пурăнма çул кăтартса пачĕ, чăваш халăхне çав çулпа хавхалантарса ертсе пычĕ. Хамăрăн пуласлă Тăван çĕршыва — ирĕклĕ республикăсен никам çĕмĕреймен союзне — эпир юратса тата ĕçпе мухтаса пурăнтăмăр.

Анчах эпир вăрçă хăрушлăхне, социализмлă государствăн чи усал тăшманĕсем пуçласа ярас вăрçăн хăрушлăхне нихăçан та манман. Эпир Совет Союзĕн оборонине пĕр чарăнмасăр тĕреклетсе пынă.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем пирĕн Тăван çĕршывăн таса çĕрĕ çине килсе кĕрсен, тупăсем кĕрлеме пуçласан, вутçулăм хумĕ пирĕн çĕршыв тăрăх шавласа явăнса пыма тытăнсан, Совет Союзĕнчи мĕн пур халăхсем, Эсир чĕннипе, фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç Аслă отечественнăй вăрçа тухрĕç.

Тăшман пирĕн телей вучахĕсене, чечеклене ларакан хирсене юнпа пĕвеме шутларĕ, нумай çулсем хушши ĕçлесе тупнă ырлăха пĕтерсе лартасшăн пулчĕ, пире чуралăха сĕтĕрсе кĕртесшĕн пулчĕ. Анчах та ирсĕр захватчиксем хытă йăнăшрĕç. Вĕсем аслă Руç ĕмĕрлĕхе пĕтĕçтернĕ ирĕклĕ республикăсен никам аркатайми союз ен мĕнпур хăватне, халăхсем хăйсен ирĕкĕпе тунă пĕрлĕхлĕ Совет Союзĕн пĕтĕм хăватне хăйсем çинче тӳссе курчĕç. Вăрçă пуçланнăранпа — вăтăр виçĕ уйăх иртрĕ. Çав вăхăт хушшинче Эсир ертсе пыракан чаплă Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç кĕтĕвĕсене тытса чарчĕ çеç мар, вăл вĕсене çапса çĕмĕрчĕ, каялла хăваласа ячĕ, Прут шывĕ патне —Совет Союзĕн государство чиккине пырса тухрĕ.

Хĕрлĕ Çар фашистла тискер кайăка тавармалли хăрушă хĕçе алла тытрĕ. Çав хĕç ыран гитлерла йыт-кĕтĕвĕсене тĕппипех пĕтерсе тăкмалла пырса çапĕ. Вара мирлĕ пурнăçăн çап-çутă хĕвелĕ пирĕн çĕршывра, пĕтĕм тĕнчере çĕнĕрен çуталса кайĕ.

Çав савăнăçлă сехете çывхартас тесе, пирĕн чăваш халăхĕ хăйĕн вăйне, хăйĕн вăхăтне шеллемесĕр ĕçлет. Пирĕн ывăлсемпе хĕрсем фронтра чаплă ĕçсем тунă вăхăтра рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци тыла хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

Пирĕн чăваш халăхĕн ывăлĕсем аслă вырăс халăхĕн тата тăванла ытти халăхсен ывăлĕсемпе юнашар тăрса кĕрешсе, çапăçу хирĕнче пирĕн ирĕклĕ Тăван çĕршыва — Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕн, телейĕн тата мухтавĕн шанчăклă никĕсне — чапа кăларчĕç.

Чăваш халăхĕн темиçе вунă паттăр ывăлне Совет Союз Геройĕн ятне панă. Пирĕн 10.000 вокна ытла Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Пирĕн мухтавлă ывăлсем хăйсен каламасăр çук чаплă землякĕн — Василий Иванович Чапаевăн çапăçури йăлисене тивĕçлипе тытса пыраççĕ, пирĕн халăх фашистла нимĕç ирсĕрĕсене пĕр шеллемесĕр хастарлăн пĕтерсе пыма панă наказа чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Эпир çакăнпа тивĕçлипе савăнатпăр.

Хĕрлĕ Çар хăйĕн таса задачине ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Вăл совет çĕрне фашистла нимĕç захватчикĕсенчен тасатса пырать. Часах совет территорийĕнче тăшманăн хĕçпăшаллă пĕр салтакĕ те тăрса юлмĕ.

Эсир «Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерӳллĕ наступленийĕ совет çыннисем пирĕн халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсенче çĕнĕрен чаплă ĕççем тунине пула пурнăçланма пултарчĕ» тенĕ сăмахсене пирĕн халăх çав тери савăнса итлерĕ.

Эсир совет тылĕн ĕçне çавăн пек пысăка хурса хакланипе тата пирĕн Хĕрлĕ Çарăн историллĕ çĕнтерĕвĕсем — пире çĕнĕ чаплă ĕççем тума хавхалантараççĕ.

Хамăр Тăван çĕршыва çав тери хытă юратнипе пире вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшать. Фронтра пирĕн мухтавлă та паттăр воинсен хĕçпăшал та, тумтир те, атăпушмак та, апат-çимĕç те çителĕклĕ пултăр тесе эпир пĕтĕм вăйна тăрăшатпăр.

1943 çулта, вăйлă тырпул туса илессишĕн çине тăрса ĕçлесе, эпир çуракине 1942 çулхинчен 12 кун маларах вĕçлерĕмĕр, тырпула фронтри пек ĕçлесе пухса кĕртрĕмĕр, тырра октябрĕн 26-мĕшĕ тĕлне çапса пĕтертĕмĕр, ноябрĕн 4-мĕшĕ тĕлне вара урăхла каласан, вăрçăченхи çулхисенчен виçĕ уйăх маларах, государствăна тырă парса татрăмăр, 1944 çулшăн та аванс шучĕпе 105.000 пăт тырă патăмăр. Çакăн хыççăн пирĕн колхозсемпе колхозниксем государствăна тата икĕ миллион çурă пăт ытларах тырă сутрĕç. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз хăй çеç 17.500 пăт тырă сутрĕ.

Хĕрлĕ Çар фондне миллион çурă пăт ытларах тырă тата аш-какай, пахча-çимĕç, ытти ялхуçалăх продукчĕсем те нумай хыврăмăр. Чăваш халăхĕ Хĕрлĕ Çарăн боевой техникине тума 90 миллион тенкĕ укçа хыврĕ. Чăваш республикинчи колхозниксем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Республикăри нумай колхозсем — Вăрнар, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Шăхасан, Етĕрне, Калинино, Елчĕк, Элĕк, Вăрмар тата ытти районсем те — вăрçă вăхăтĕнчи условисенче кăтартуллăн ĕçлеççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем, ялхуçалăхĕнчи работниксем хирсенче вăйлă ĕçлерĕç. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче эпир гектартан вăтамран 12,2 центнер тĕштырă туса илтĕмĕр, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз вара гектартан 17 центнер тырă пухса илчĕ. Ăна ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлă колхоз, пĕтĕм Совет Союзĕпе чапа тухнăскер, гектартан 100 пăт тĕштырă туса илчĕ.

Иртнĕ çулта республикăри МТС-сен нумай тракторисчĕсемпе комбайнерĕсем тата ытти работникĕсем те кăтартуллăн ĕçлерĕç. Шăхасан МТС-ĕн Тимофеев ертсе пыракан трактор бригади, тракторпа ĕçлемелли ĕçсен çулталăкри планне 170 процент пурнăçланă, 3.000 килограмм яхăн горючи перекетлесе хăварнă. Çĕрпӳ МТС-ĕн комбайнерĕ Громов хăйĕн комбайнĕпе пĕр сезонра 405 гектар вырса пуçтарнă, 560 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пирĕн республикăри колхозсем пĕлтĕр çакăн чухлĕ пурнăçларĕç: майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе—114 процент, сыхнасем енĕпе—108,7 процент, сурăхсем енĕпе — 112,2 процент. Вăрçăн малтанхи икĕ çулталăкĕ хушшинче пирĕн колхозсенче ĕнесемпе вăкăрсен хисепĕ 58,7 процент, сыснасен хисепĕ — 5,7 процент, сурăхсен хисепĕ—икĕ хута яхăн ӳсрĕ.

Сĕнтĕр районĕнчи «Çĕнĕ Юнкă» колхозăн сысна пăхакан̆ĕ Ванюкова кашни ама сыснаран çуллеп 19—20-шер çăвăр илет. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозăн пăру пăхаканĕ Белорусова 25 ĕнерен 25 пăру илсе ӳстернĕ, унăн кашни пăрăвĕ 6 уйăха çитиччен кашни талăкра вăтамран 600 грамм хутшăнса пынă. Комсомольски районри Шмидт ячĕпе тăракан колхозăн кĕтӳçи Волкова 100 сурăхран 141 пӳтек илсе ӳстернĕ. Красноармейски районри «12 лет Октября» колхозăн старши конюхĕ Романов 54 кĕсререн 53 тиха илсе сыхласа хăварнă.

Государствăна аш-какай памалли плана эпир срокчен тултартăмăр, 1943 çулта 1942 çулхинчен 207,3 пин пăт ытларах какай патăмăр тата 1944 çулшăн та аванс шучĕпе 163 пин пăт какай парса хутăмăр. Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене эпир 7.000 пуç ытла выльăх ятăмăр.

Пирĕн колхозсенче Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен çемьисене ырă кăмăлпа пăхаççĕ, вĕсемшĕн тăрăшаççĕ. Çав çемьесем пĕлтĕр 100 пин пăта яхăн тĕштырă, çăнăх тата ытти продуктсем илнĕ, вĕсене 20 пин пуç выльăх панă. Çурт таврашĕнчи пахчасем валли вĕсене 1.400 гектар çĕр хушса панă тата çав лаптăка акмаллăх вăрлăх панă. Фронтовиксен çемьисен 15 пин членне квалификаци туянма пулăшнă, фронтовиксен тăлăха юлнă темиçе çĕр ачине колхозсенчи ача интерначĕсене вырнаçтарнă.

Тăшмана татăклăнах çĕнтермешкĕн фронта пулăшас тесе эпир пиме те шеллесе тăмăпăр, тесе Сирĕн умăрта Сталин юлташ, тупа тăватпăр. Совет гражданĕсене асаплантарнă фашистла нимĕç ирсĕрĕсем пире çав тери хытă çилентерчĕç. Çав çилĕ вăл пирĕн çĕр çинче пĕр гитлеровец та сӳреме пăрахиччен сӳнмĕ. Эпир фронта пĕтĕм вăйран пулăшăпăр. Хамăр Тăван Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парăпăр.

Эсир фашистла нимĕç захватчикĕсене пĕтĕмпех çĕнтермешкĕн халĕ çĕнĕрен вăй хурса ĕçлени кирлĕ тесе каланине эпир асра тытатпăр. Сирĕн çав наказа эпир пурнăçа кĕртĕпĕр.

Паян Оборонăн Государственный Комитечĕн чаплă Хĕрлĕ Ялав умĕнче эпир Сире, хаклă Иосиф Виссарионович, çапла тупа тăватпăр:

1944 çулта пĕтĕм акнă лаптăкра кашни гектартан вăтамран тĕштырă—12,5 центнертан, йĕтĕн — 3 центнертан, кантăрвăрри—4 центнертан, махорка — 15 центнертан, çĕрулми—105 центнертан кая мар туса илмелле; çумкурăкĕсене çине тăрса пĕтерсе пымалла, тыра калчисене лайăх пăхмалла, тырра вăхăтра пуçтарса кĕртмелле, государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене срокчен пурнăçламалла; республикăри МТС-сен машинисемпе тракторĕсене пĕтĕмпех юсаса çитерсе, вĕсене ялан юсавлă тытмалла; тракторпа тумалли ĕçсен планне пурнăçламалла, 15 вăйлă тракторпа вăтамран 320 гектар, комбайнпа 110 гектар ĕçлемелле, трактор молотилкипе 450 тонна тырă çапмалла; трактор ĕçĕсен хăйне ларакан хакне тата горючи расходлассине 5 процент чакармалла; обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетмелли тата выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне ӳстермелли государство планне кашни колхозрах пурнăçламалла, лашасен хисепне 6 процент, ĕнесемпе вăкăрсен хисепне 15 процент, сыснасен хисепне 25 процент, сурăхсемпе качакасен хисепне 21 процент ӳстермелле. Кашни 100 кĕсререн 50 тихаран кая мар, кашни 100 сурăхран 110 пӳтекрен кая мар, кашни сысна аминчен 11 çăвăртан кая мар илсе ӳстермелле. Кашни сăвакан ĕнерен 1.100 литртан кая мар сĕт суса илмелле, кашни сурăхран 2,3 килограмм çăм илмелле; хăрнă садсене вĕсен пĕтĕм лаптăкĕн çурринчен кая мар çĕнĕрен лартса ӳстермелле, ĕлĕк пахчасем пулман колхозсенче сад-пахчисемпе çырла пахчисем пĕрер гектартан кая мар лартса ӳстермелле. Колхозниксен çурт таврашĕнчи участокĕсем çине 10—15-шер сад йывăççи тата 20 — 25 çырла тĕмĕ лартмалла.

Халĕ пирĕн пĕтĕм вăй çуракине кăтартуллăн хатĕрленес ĕçе каять. Пирĕн колхозсенчен нумайăшĕ вăрлăх çителĕклĕ тунса хунă. Кĕрешӳре ĕçре пĕр-пĕрне пулăшас кăмăлпа пурăнса, пирĕн вăрлăх ытлашши пур колхозсем вăрлăх çитмен колхозсене вăрлăх сутса е кивçен парса пулăшаççĕ. Çак юхăма Шупашкар районĕнчи «Осоавиахим» колхоз пуçарса ячĕ. Вăл кӳршĕри «Бикшихи» колхоза 160 пăт тырă пачĕ. Егоров колхозник хăйĕн «Урожай» колхозне 140 пăт тĕрĕ культурăсен вăрлăхĕ пачĕ. Çак юхăм хальь ӳссе саралса пырать.

Хаклă Сталин юлташ!

Пирĕн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пакĕмĕн хут пани колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсемпе комбайнерсене, ялхуçалăхĕнчи специалистсене тата пирĕн республикăри мĕнпур ĕççыннисене калама çук хавхалантарчĕ. Эпир хамăр ĕçе çавăн пек пысăк хак панине питĕ савăнтăмăр, çак хисеплĕ наградăна панине эпир фронта пулăшас тĕлĕшпе тата вăйларах ĕçлеме ответлĕ тупа тăватпăр.

Радио Мускавран çĕнтерӳ салючĕн чуна çĕклентерекен сассине пирĕн пата илсе çитермессерен пирĕн шухăш, пирĕн кăмăл Сирĕн пата туртăнать. Эсир малта пыракан пĕтĕм прогрессивлăй этемлĕхĕн ырлăхĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнишĕн Сире халăх çав тери хытă тав тăвать. Пирĕн чĕресем Сире, Ленинпа Сталинăн чаплă партине парăннă. Пирĕн хаклă Иосиф Виссарионович, Эсир ертсе пынипе эпир малтан малалла, пĕтĕмпех çĕнтересси патне пыратпăр!

Хамăрăн çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çара — мухтав!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи халăхсен сталинла туслăхĕ!

Сывă пултăр пирĕн аслă Тăван çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕ!

Аслă çулпуçăмăра, Хĕрлĕ Çарăн геннллĕ полководецне, пирĕн аттемĕрпе учителĕмĕре, Иосиф Виссарионович Сталина— чыс та мухтав!

Çак çырăва 1944 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнче Чăваш АССР-ĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракансен слечĕнче йышăннă.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТĂН 31-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 31-мӗшӗнче УКРАИНĂРИ 1-мӗш фронт çарӗсем çаплах наступлени туса пынă, Каменец-Подольск облаçӗнчи район центрӗ пулса тăракан ДУНАЕВЦЫ хулине — çулсен паха узелне тата ним ӗçсен оборонин вăйлă тӗреклетӗнӗ пунктне — туртса илнӗ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса СМОТРИЧЕВКА, ЗЕЛЕНЧИ, ЧАНЬКОВ, ЗАЛЕСЦЫ, ПАНАСОВКА, ВОРОБЕЕВКА, ИВАНЬКОВЦЫ, ДЗЕРЖАНОВКА, ЯЦКОВЕЦКАЯ ГУТА КСАВЕРОВКА, КНЯЖЕПОЛЬ, ВЫХВАТНЕВЦЫ, СТУДЕНИЦА, ДӖМШИН, ФУРМАНОВКА, ВРУБЛЕВЦЫ ялӗсене йышăннă.

КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК хулинчен кăнтăртарахра пирӗн ДНЕСТРПА ПРУТ шывӗсем хушшинче наступлени туса пыракан çарсем ДАРАБАНЫ, КАПЛЕВКА, ДАНКОВЦЫ, БЕЛЕВЦЫ, КИШЛА САЛИЕВКА, МАМАЛЫГА, КРИВА ялӗсене тата КРИВА, МАМАЛЫГА чугун çул станцийӗсене туртса илнӗ.

КИШИНЕВ хули енче пирӗн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла туртса илнӗ. Вăл шутра — ПАРКАНЬ, ШИПОТЕНЬ, ПЕПЕНИ, ВАДУЛЕКА, БРЫНЗЕНИ ТЫРШИЦЕЙ, СЫРКОВА, ЦАРЕНИ, ВЫХВАТИНЦЫ, ЗОЗУЛАНЫ, ПОПЕНКИ, КУЛЬНА ятлă пысăк ялсем тата ШИПОТЕНЬ ятлă чугун çул станцийӗсем. Çапла пирӗн çарсем КИШИНЕВПА ЯССЫ хулисем хушшинчи чугун çула татнă.

ТИРАСПОЛЬ хули енче пирӗн çарсем çаплах наступление вăйлатса пынă, Одесса облаçӗнчи район центрӗсене — КОТОВСК хулипе пысăк чугун çул станцине, АНАНЬЕВ хулине тата АНДРЕЕВО-ИВАНОВКА ялне туртса илнӗ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ВАЛЯРКА, ЕЛИЗАВЕТОВКА, ГОНДРАБУРА, ШЕЛЕХОВО, ЕКАТЕРИНОВКА, ПОКРОВКА, НИКОЛАЕВКА, ИСАЕВО, ОСТРОВКА, ИВАНОВКА ятлă пысăк ялсем тата ЧУБОВКА ятлă чугун çул станцийӗ.

ОДЕССА хули енче пирӗн çарсем каялла чакакан тăшмана хăвалаласа пынă, Одесса облаçӗнчи район центрне — БЕРЕЗОВКА хулипе пысăк чугун çул станцине, Николаев облаçӗнчи ТИЛИГУЛО-БЕРЕЗАНКА (СУВОРОВО) район центрне туртса илнӗ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 160 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — СТРЮКОВО, ШВАРЦЕВО, ПЕТРОВКА, БОГОРОЖДЕСТВЕНКА, ОСКАРОВКА, ЗАВОДОВКА, БОРОНО, РОРБАХ, ОСНОВА, ИГНАТОВКА, КОМИССАРОВКА, АДАМОВО ятлă пысăк ялсем тата КОЛОСОВКА, КАЛАГЛЕЯ ятлă чугун çул станцийӗсем.

УКРАИНĂРИ 3-мӗш фронт çарӗсем, наступлени туса пырса, ОЧАКОВ хулипе крепоçне туртса илнӗ. Вăл хула нимӗçсен оборонин паха пункчӗ пулса тăнă, ДНЕПРПА БУГ лиманне кӗмелли вырăна питӗрсе тăнă.

Фронтăн ытти участокӗсенче чылай пункцсенче тӗллӗн-тӗллӗн çапăçнă.

Мартăн 30-мӗшӗнче пирӗн çарсем мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 29 танкне çӗмӗрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлăй артиллери тăшманăн 35 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мӗш фронт çарӗсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Паян Каменец-Подольск облаçӗнчи район центрӗ патне Дунаевцы хули патне пымалли вырăнсенче хаяр çапăçусем пулса иртнӗ. Нимӗçсем, хăйсен вăйӗсем темӗн чухлӗ нумай пӗтнӗ пулин те, çак тӗреклӗ пунктпа шоссе çулӗсен паха узелне хăйсен аллинчех тытса тăма тăрăшнă, мӗншӗн тесен ку пункт вӗсене хăйсен вăйӗсене ăçта кирлӗ çавăнта куçарма май парса тăнă. Пӗр соединени боецӗсем тăшман хирӗç тăнине çӗмӗрсе тăкнă та, татăклăн пырса çапса, нимӗçсене Дунаевцы хулинчен хăваласа кăларнă. Çапăçу хирӗнче тăшман виллисем нумай выртса юлнă. Пирӗн çарсем хӗçпăшал тата вăрçă япалисем нумай тытса илнӗ.

Черновицы хулишӗн пынă çапăçура пирӗн çарсем 1.500 гитлеровеца ытла вӗлерсе пӗтернӗ, тăшманăн 900 салтакӗпе офицерне тыткăна илнӗ. Трофейăсем тытса илнӗ, вăл шутра — 14 чугун çул эшелонӗ, çар хатӗрӗсем тиесе лартнă 312 вагонпа платформа, апат-çимӗç, хӗçпăшал тата боеприпассен 12 пысăк склачӗ, темиçе çӗр автомашина тата тӗрлӗ хӗçпăшал нумай. Черновицы хулишӗн çапăçнă чухне Иванов юлташ командир пулса ертсе пыракан танкистсем сасартăк тăшман аэродромне вăркăнса кӗрсе кайнă. Аэродромра вăл вăхăтра тăшманăн 40 самолет — транспорт самолечӗсемпе боевой самолетсем тăнă. Аэродромри пӗр самолет та çӳлелле вӗçсе хăпарма ӗлкӗреймен. Тăшман самолечӗсен пӗр пайне танкистсем пӗтерсе тăкнă, ыттисене юсавлăскерсенех тытса илнӗ.

* * *

Кишинев хули енче пирӗн çарсем малалла танăнса пынă. Пӗр соединени чаçӗсем çав тери хăвăрт ыткăнса малалла куçнă та Шипотень чугун çул станцине туртса илнӗ. Çапла совет çарӗсем нимӗçсен бăнтăрти группировкишӗн питӗ кирлӗ пулса тăракан Кишиневпа Яссы хулисем хушшинчи чугун çула татнă. Пирӗн тепӗр соединени чаçӗсем юлашки çапăçусенче 2000 гитлеровеца ытла пӗтерсе тăкнă. Каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, совет боецӗсем 52 тупă, 34 миномет, 35 бронетранспортер тата 300 автомашина тытса илнӗ. Нимӗçсемпе румынсен 500 салтакӗпе офицерне ытла тыткăна илнӗ.

* * *

Одесса хули енче пирӗн çарсем каялла чакакан тăшмана хăваласа пыраççӗ, ума-хыçлăн пыра-пыра çапăççӗ. Пӗр соединени боецӗсем 15 километр малалла куçнă та Березовка хулипе пысăк чугун çул станцине туртса илнӗ. Советсен ытти чаçӗсем Николаев облаçӗнчи Тилигуло-Березанка (Суворово) район центрне тата халăх пурăнакан ытти 160 пункта ытла туртса илнӗ. Пӗр районра советсен темиçе танкӗ халăх пурăнакан пӗр пысăк пункта вăркăнса кӗрсе кайнă. Çак ялти гитлеровецсем, çавăрса илессинчен хăраса тарнă, 16 тупă, 100 автомашина, апат-çимӗç обозӗ тата юханшывсем урлă каçма кирлӗ япаласен паркне пăрахса хăварнă. Колосовка чугун çул станцийӗнче пирӗн боецсем тăшманăн çар пурлăхӗ турттарса пыракан 2 эшелонне тытса илнӗ.

* * *

Украинăри 3-мӗш фронт çарӗсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Пӗр соединени чаçӗсем, тăшмантан иртсе каймалли маневр туса, нимӗçсен Очаков крепоçӗнчи хулинчи нимӗç гарнизонне çавăрса илме тытăннă. Çав вăхăтрах Хура тинӗс флочӗн çыранри оборонин Кинбург çăмсахӗ çинче тăнă десант ушкăнӗ Днепрпа Буг лиманӗ урлă каçнă те Очаков портне вăркăнса кӗрсе кайнă. Пирӗн çарсем пӗр вăхăтра тип çӗр çинчен те, тинӗс çинчен те пырса çапса Очаков хулине крепоçне тытса илнӗ. Хура тинӗс флочӗн десант ушкăнӗ çавăн пекех тата Первомайски утравне йышăннă. Çапла ӗнтӗ Днепрпа Буг лиманне кӗмелли участока фашистла нимӗç захватчикӗсенчен пӗтӗмӗшпех тасатнă.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлă Балтика флочӗн авиацийӗн сывлăшри разведки тул çутăлса килнӗ вăхăтра Нарва заливӗнче тăшман карапӗсен ушкăнне асăрханă. Совет бомбардировщикӗсемпе штурмовикӗсем тата вӗсене хӳтӗлесе пыракан истребительсем çавăнтах вӗçсе хăпарнă та тăшман судниcене атакăланă. Суднăсем çинчи зенитлăй артиллери вăйлă персе тăнă пулин те, пирӗн летчиксем суднăсем тӗлне вӗçсе тухнă та тăшманăн хуралта çӳрекен 2 карапне тата хуралта çӳрекен 2 катерне шыва путарнă. Сывлăшри çапăçусенче пирӗн летчиксем нимӗçсен 6 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Нимӗçсен командованийӗ Крымра унти партизансемпе кӗрешме ятарласа уйрăм штаб тунă. Анчах та нимӗçсен çар влаçӗсем Крымри партизансене пӗтерме тăрăшни пӗтӗмӗшпех путланса ларнă. Юлашки вăхăтра партизансем тата вăйлăрах ӗçлеме тытăннă. Март уйăхӗн иккӗмӗш çурринче Крымри партизансем нимӗçсемпе румынсен оккупанчӗсене 400 çынна çити вӗлерсе пӗтернӗ. Подрывник-партизансем Джанкой станцийӗнче горючи тиенӗ чугун çул составне сиктерсе янă.

Нимӗçсене шывсем те, сăрт-тусем те хӳтӗлеймӗç

Мухтавлă Хӗрлӗ Çарăн çӗнтерӗвӗсене тылра çитӗнӳсем тунипе саламласси рабочисемпе инженерла-техникла работникӗсен, служащисен тата колхозниксемпе колхозницăсен кулленхи йăли пулса тăчӗ. Хӗрлӗ Çар государство чиккине тухни çинчен Сталин юлташăн приказне радио тăрăх панă хыççăнах предприятисемпе колхозсенче пухусем тата митингсем пулса иртрӗç. Вăл пухусемпе митингсенче рабочисемпе колхозниксем çӗнӗ обязательствăсем илчӗç.

Шупашкарти макарон фабрикин коллективӗ апрель уйăхӗнчи плана 25 кун хушшинче тултарма тата электроэнерги расходласснпе 25 процент чакарма пулчӗ. Çав заводри механически цех коллективӗ нормăран ирттерсе продукци туса кăларма сăмах пачӗ. Матвеева юлташ ертсе пыракан фронтовой бригада Хӗрлӗ Çар çӗнӗ çӗнтерӳ тунă ятпа стахановла вахтăна тăчӗ. Вăл бригадăри самрăксем кашни кунах нормăна чылай ирттерсе тултараççӗ.

Челноков главнăй инженер пулса ӗçлекен заводри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем ӗç тухăçлăхне малалла ӳстерсе пыма, продукци пахалăхне лайăхлатма пулнă. Нумай рабочисем митингсемпе пухусенче Хӗрлӗ Çарăн çитӗнӗвӗсемпе тулли кăмăлпа савăнни çинчен пӗлтереççӗ. Стахановец Федоров юлташ митингра çапла каланă:

— Украинăри 2-мӗш фронт çарӗсем государство чиккине тухнишӗн мӗн таран савăннине каласа пама сăмах та тупаймастăп. Совет çӗршывне гитлеровецсенчен пӗтӗмпех тасатса çитермелли çутă кун сывăхарса килет. Хӗрлӗ Çар нимӗç захватчикӗсене хӗвеланăçнелле хăвалать. Нимӗçсене шывсем те, сăрт-тусем те хӳтӗлеймӗç. Эпӗ çӗнтерӳ кунне çывăхартас тесе куллен икӗ норма тултарса ӗçлеме сăмах паратăп.

Заводри пур цехсенчи рабочисем те çӗнӗ обязательствăсем илеççӗ. Вӗсем мӗнпур вăя Хӗрлӗ Çара пулăшнă çӗре пама хатӗр.

СУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТӖРЛЕНЕР

МТС-ри коммунистсем

Шăхасанти МТС иртнӗ çулта тракторсемпе ӗçлемелли государство планне 116,2 процент тултарчӗ. 12 пин килограма яхăн горючи перекетлесе хăварса, планран иттерсе 900 гектар ытла сухаларӗ.

ВКП(б) членӗсемпе кандидачӗсем производствăра яланах малта пыраççӗ, вӗсем трактористсене пысăк тухăçлăн, лайăх пахалăхпа ӗçлеме вӗрентеççӗ.

Пуçламӗш парторганизаци секретарӗ П. Тимофеев юлташ 6-мӗш трактор бригадин бригадирӗ пулса ӗçлет. Унăн бригади иртнӗ çулта тракторсемпе ӗçлемелли плана 170 процент тултарчӗ, 3000 килограмм горючи перекетлесе хăварчӗ. И. Моисеев, А. Григорьев, И. Филиппов коммунистсем ертсе пыракан бригадăсем хăйсен планӗсене ирттерсе тултарчӗç. Çавăн пекех коммунист-трактористсем А. Емельянов, А. Григорьев юлташсем те пур ӗçсенче те яланах малта пыраççӗ. Вӗсем хăйсен паха примерӗсемпе ытти трактористсемпе комбайнерсене ӗçре хавхалантарса пыраççӗ.

Тракторсем юсас енӗпе кăçал МТС республикăра малти вырăна тухрӗ. 1943 çулта ВКП(б) Обкомӗпе Чăваш АССР Совнаркомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗçлӗ пулчӗ. Тракторсене тата ытти ялхуçалăх машинисене юсас ӗçре коммунистсемпе механиксем пуçарса пынипе кивӗ детальсене çӗнетес тата çӗнӗ детальсем туса хатӗрлес ӗçе айăн туса пычӗç. Иртнӗ çулсенче тракторсен хăшпӗр деталӗсене урăх çӗртен кӳрсе килпӗ, пулсан, кăçал çав детальсене МТС мастерскойӗнчех турӗç. Тракторсене юсанă вăхăтра тӗрлӗ детальсене 14.000 тенкӗлӗх ытла реставрацилене.

Тракторсене юсас ӗçре те коммунистсем ертсе пыракан бригадăсем мала тухрӗç. П. Тимофеев юлташ ертсе пыракан 6-мӗш бригада тракторсене пуриччеп малтан тата пысăк пахалăхпа юсаса пӗтерчӗ. И. Моисеев, А. Григорьев коммунистсем ертсе пыракан бригадăсем те тракторсене ытти бригадăсенчен маларах юсаса пӗтерчӗç.

Комбайнсене юсасси те ăнăçлăн пулса пырать. МТС коллективӗ комбайнсемпе молотилкăсене суракине тухиччен юсаса пӗтерме обязательство илчӗ. Паянхи куна 76 процент юсанă та ӗнтӗ.

Коммунистсем производствăра малта пынипе пӗрлех партире тăман трактористсемпе комбайнерсем хушшинче массăллă ăнлантару ӗçне аван туса пыраççӗ. СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнăй Комитечӗ 1944 çулхи ялхуçалăх ӗçӗсен планӗ çинчен йышăннă постановленине ăнлантарса парас енӗпе пуçламӗш парторганизаци МТС работникӗсемпе колхозниксем хушшинче те тăрăшса ӗçлет.

МТС кăçалхи суракине пур енчен те лайăх хатӗрленсе çитрӗ. Трактористсем кăçалхи суракине ăнăçлăн ирттерессишӗн, горючипе сӗрмелли япаласене ытларах перекетлессишӗн пӗр-пӗринпе социализмлă ăмăртăва тухрӗç. МТС Канашри машинно-тракторнăй станципе ăмăртса ӗçлет.

— Пирӗн тунă çитӗнӳсемпе лăпланса лармалла мар. Эпир плана тата ытларах ирттерсе тултарма пултарапăр. Çӗршыва фронтшăн, çӗнтерӳшӗн вăя шеллемесӗр ӗçлесе, кăçал çулталăкри плана 150 процент тултарассишӗн кӗрешетпӗр, — тет МТС директорӗ коммунист Н. Константинов юлташ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Суракине 8 кунта туса ирттерме йышăнчӗç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, апрелӗн 1-мӗшӗ. (Хамăр корр.). Ильич ячӗпе тăракан колхоз суракине пӗтӗмпех хатӗрленсе çитнӗ. Уйăхлăх вăхăтӗнче 44 центнер кӗл, 38 центнер кайăк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнă, уя 580 лав тислӗк кăларнă. Колхоз тимӗрçи А. Кузнецов 13 плуг, 2 сеялка юсанă. Çӗнӗрен 31 сӳре турти авса хунă.

Колхозăн кăçал çурхи тырăсем 90 гектар çине акса хăвармалла. Акма 158 центнер вăрлăх хатӗрленӗ. Купăста, кишӗр, хӗрлӗ кăшман тата ытти пахча-çимӗç вăрлăхӗсене те хатӗрленӗ. Вăрлăхсем пурте лайăх.

Колхоз кăçал Хӗрлӗ Çар çӗнтерӗвӗсене гектартан 100 пăтран кая мар тырă туса илнипе ответлеме пулчӗ. Колхозниксем вăрлăха яровизацилесе акма шутлаççӗ. Çуркунне 10 гектар ыраш, 6 гектар тулă калчисене тислӗк шывӗпе апатлантараççӗ, 2 гектар пулă, 2 гектар кантăр вăррине мульчировани тăваççӗ. Çӗрулми ытларах илес тесе, 4 гектар çинче çӗнӗ опыт туса пăлăртнă. Вăл опыт çапла: çӗрулми лартнă хыççăн касăсем хушшине йӗпе улăм сарса тухаççӗ. Çумлăса кăларнă хыççăн тата улăм сараççӗ.

Кăçал планран ирттерсе 12 гектар çӗрулми лартма палăртнă. Колхоз ӗç планӗ туса çирӗплетнӗ. Суракине 8 кун хушшинче пӗтерме палăртнă. Колхозниксем халь, ырми-канми ӗçлесе, фронтпа çӗршыва ытларах пахча-çимӗç парассишӗн кӗрешеççӗ.

Вăрлăх парса пулăшрӗç

ÇӖРПӲ. «Сталинцы» колхоз Шăмăршă районӗнчи Сталин ячӗпе тăракан колхоза 15 центнер вăрлăхлăх сӗлӗ парса пулăшрӗ.

А. МИХЕЕВ.

Ют çӗршывсенче

„Совет Союзӗнчи халăхсем çӗнтерӳ тăвасси çине çирӗп шанса тăраççӗ"

Совет çарӗсем çӗнтерӳллӗн наступлени туса пыни çинчен США-ра тата Англире мӗн калаççӗ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Хӗрлӗ Çар çӗнтерӳллӗн наступлени туса пыни çинчен Америкăри хаçатсем халӗ те нумай çыраççӗ. Совет çарӗсем малалла кайни çинчен пӗлтернисене пысăк заголовоксемпе пичетлеççӗ. Хаçатсем Хӗрлӗ Çар наступлени туса пыни çинчен статьясем пичетлесе кăлараççӗ. Вӗсенче Хӗрлӗ Çар тунă ӳсӗмсем вăрçăпа стратеги тата политика тӗлӗшӗнчен питӗ паха ӳсӗмсем пулнине палăртаççӗ.

«НЬЮ-ЙОРК геральд трибюн» хаçат «Чикке тухнă» текен уйстатьяра çапла çырнă: «СССР-ӗн опытран вӗренме пултаракан тата тактикăпа стратегин кирек мӗнле майӗсемпе те усă курма пултаракан, çӗнӗ тата кивӗ йышши хӗçпăшалсемпе усă курма пӗлекен, вăрçă меслечӗсемпе çавăрăнăçуллăн пурнăçа кӗртме пултаракан çар тата командовани пур. Совет Союзӗнчи халăх хăй çӗнтерессине çине çирӗппӗн шанса тăрать».

ЛОНДОН, мартăн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонри радио совет çарӗсем наступлени туса пыни çинчен çапла калать: вырăсем хăвăрттăн куçса пырса, нимӗçсене хăваласа пырса, Карпат тăвӗсем умне пырса тухрӗç. Совет çарӗсем çисӗмле хăвăрт куçса пынине пула нимӗçсем сухалса кайрӗç. Вӗсем хăйсене хальхи вăхăтра питех те кирлӗ çар материалӗсене калама çук нумай пăрахса хăвараççӗ.

Англири хаçатсем Хӗрлӗ Çар Николаев хулине туртса илни çинчен чи пысăк заголовоксемпе пичетлесе кăларнă. «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçат редакци çырнă статьяра Николаев хулине илни пысăк çӗнтерӳ пулса тăнине палăртать.

Хӗвеланăç Украинăра çуралса ӳснӗ салтаксем Польша çарӗнчен тухма тăрăшаççӗ

ЛОНДОН, мартăн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Виçӗ кун каярах Польша çарӗнчи 35 салтак, вырăссемпе украинецсем, Украинăн хӗвеланăç облаçӗсенче çуралса ӳснӗскерсем, хăйсен çар чаçӗсенчен тухнă та Лондона пынă. Вӗсем унта Англи влаçӗсенчен хăйсене Польша çарӗнчен куçарма ыйтаççӗ.

ТАСС корреспонденчӗ салтаксем пурăнакан çуртра пулса / çакна пӗлнӗ: пур салтаксем те Польша çарне 1941 çулхи июнӗн 22-мӗшӗ хыççăн хăйсен ирӗкӗпе кайнă. Вӗсем вăрçă пуçланиччченех Аргентинăна ӗçлеме кайнă пулнă, анчах та Польша гражданӗсем шутланса тăнă. Салтаксем хăйсем пур майсемпе те совет гражданствине куçма тăрăшни çинчен пӗлтернӗ. Халлӗхе вӗсем совета хирӗçле шухăшсем хытă сарăлнă Польша çарӗнчен тухасшăн. Эпир хамăрăн Тăван çӗршыва хирӗç кӗрешесшӗн мар, теççӗ салтаксем. Вӗсем хăйсене çар сучӗ умне тăрататассине ăнланаççӗ. Апла пулин те вӗсем хăйсен чаçӗсене тавăрăпасшăн мар. Польша влаçӗсем çав салтаксене хăйсен чаçӗсене тавăрăнма ӳкӗтлеме Савва епископа хушнă. Анчах та унăн та ӗçӗ ăнăçлă пулман.

Салтаксем шутланă тăрăх, çак ыйтăва татса парасси Англи влаçӗсенчен килет. Салтаксем Польша çарӗнче Хӗвеланăç Украинăпа Хӗвеланăç Белоруссире çуралса ӳснӗ салтаксем 2,5 пин çын Польша çарӗнчен тухма ӗмӗтленни çинчен калаcа параççӗ.

ЛОНДОНРА ПУРĂНАКАН КĂНТĂРТИ СЛАВЯНСЕН МИТИНГӖ

ЛОНДОН, мартăн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Мартăн 27-мӗшӗнче Лондонра Югославири государство влаçне улăштарнăранпа виçӗ çул тултарнă ятпа Лондонра пурăнакан кăнтăрти славянсен митингӗ пулса иртнӗ. Митингра 200 славян пулнă. Вӗсем пӗрлешӳллӗ халăхсен правительствисене «Югославин эмигрантри, халăха ирӗке кăларассишӗн кӗрешессине хирӗç пыракан, правительствипе сыхăнма çарахма» чӗннӗ, унăн çар министрӗ оккупантсене хирӗç кӗрешмест кăна мар, вăл хальхи тапхăрта вӗсемпе килӗшӳсем те тăвать, тенӗ.

«Эпир пӗрлешӳллӗ мӗнпур халăхсене тата уйрăмах аслă союзниксене, — тенӗ чӗнсе каланинче, — Югослави халăхне ирӗке кăларассишӗн кӗрешекен комитета йышăнма чӗнетпӗр. Эпир пӗрлешӳллӗ халăхсен правительствисене, уйрăмах аслă державăсен правительствисене, Югослави халăх пурлăхне тата унăн ют çӗршывсенче пурăнакан гражданӗсен пурлăхӗсене эмигрантри правительствăн авантюристчӗсем салатса ярассинчен хӳтӗлес тӗлӗшпе халăха ирӗке кăларассишӗн кӗрешекен комитета пулăшма чӗнетпӗр», тенӗ.

Митинг Сталин, Черчилль тата Тито патне саламлă телеграммăсем янă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, мартăн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Югославирен пӗлтернӗ тăрăх, Хӗвелтухăç Боснире çаплах хаяр çапăçусем пыраççӗ. Фронтăн нумай участокӗсенче пуçару халăха ирӗке кăларассишӗн кӗрешекен çар аллинче.

Халăха ирӗке кăларассишӗн кӗрешекен çарăн 26-мӗш дивизийӗн чаçӗсем виçӗ кун çапăçнă хыççăн Далмаци çыранӗнчи Хвар утравне йышăннă.

Чылай участоксенче тăшманăн 5 çар поездне ӳпӗнтерсе янă. Крушевсенче тăшман салтакӗсем нумай вилсе е аманса пӗтнӗ.

Халăха ирӗке кăларассишӗн кӗрешекен çарăн тинӗс хӗрринче кӗрешекен ушкăнӗ оккупантсемпе тата Михайлович четникӗсемпе ăнăçлă çапăçнă хыççăн темиçе пункт туртса илнӗ.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ӖÇӖСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарӗсен главнăй штабӗ çапла пӗлтерет: тăшман Анцио районӗнчи плацдарма тапăнса икӗ пӗчӗк атака туса янă, вӗсене иккӗшне те сирсе янă. Пур фронтсенче те патрульсем кӗрешнӗ.

Иртнӗ çӗр вăтам тата йывăр бомбардировщиксем София хулинчи сортировка станцине тапăннă. Союзниксен авиацийӗ тăшманăн Италири объекчӗсене чылайӗшне атакăланă тата Югослави çыранӗ патӗнче тăшман судниcемпе кӗрешнӗ. Тăшманăн 22 самолетне пӗтерсе тăкнă. Союзниксен 11 самолет пӗтнӗ. Союзниксен Вăтаçӗр тинӗсри сывлăш-çар вăйӗсем кун каçа 1.800 вӗçеве яхăн тунă.

ЛОНДОН, мартăн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарӗсен главнăй штабӗ çапла пӗлтерет: тăшман Кассино патӗнче икӗ хут атака тунă, союзниксен вăйӗсем вӗсене сирсе янă. Тăшмана сухатусем кӳнӗ. Пур фронтсенче те патрульсем çапăçнă.

Союзниксен авиацийӗ нимӗçсен Имотскири аэродромне (Югослави) тапăннă. Ытти соединенисем тăшман судниcем çине тата Италири çар объекчӗсем çине бомбăсем пăрахнă.

АНГЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ШАННИ

ЛОНДОН, мартăн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пӗлтерет: паян общинăсен палати Англи правительствине шанатпăр тесе 425 сасă панă, хирӗç 23 сас пулнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙӖН ӖÇӖСЕМ

Нюрнберг хулипе Рура тапăнни. — Америка самолечӗсем София хулине вăйлă тапăннă. — Францири аэродромсене тапăнни

ЛОНДОН, мартăн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тăрăх, мартăн 28-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле Англи бомбардировщикӗсем Рурти çар объекчӗсене тапăннă.

ЛОНДОН, мартăн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тăрăх, мартăн 28-мӗшӗнче Америка самолечӗсем нимӗçсен Шартри, Шатодюнри, Реймсри тата Дижонри (Франци) аэродромӗсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, мартăн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тăрăх, мартăн 31-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле Англи авиацийӗн самолечӗсем Германие питӗ йышлăн вӗçсе кайса тапăннă. Нюрнберг хулине пуринчен те вăйлăрах атакăланă. Çавăн пекех тата Хӗвеланăç Германири ытти хуласем çине те бомбăсем нумай пăрахнă.

Хăйсен базисене 96 бомбардировщик тавăрăнман.

ЛОНДОН, мартăн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарӗсен главнăй штабӗ çапла пӗлтерет: мартăн 30-мӗшӗнче союзниксен сывлăш-çар вăйӗсем София хулине вăйлă тапăннă. Çав хулана Италири аэродромсем çинчен вӗçсе хăпарнă американецсен темиçе çӗр йывăр бомбардировщикӗ тапăннă. Хулара питӗ вăйлă взрывсем пулни палăрнă, темӗн чухлӗ пушар тухнă.

Иртнӗ çӗр София хулине Англи самолечӗсем тапăннă.

Хула çинче тăшман истребителӗсем чылай вăйлă хирӗç тăрса çапăçнă. Çав истребительсене хăшне-пӗрне союзниксен бомбардировщикӗсене хӳтӗлесе пынă самолетсем персе ӳкернӗ, хăшне-пӗрне — бомбардировщиксем хăйсемех персе ӳкернӗ.

АМЕРИКА ÇАРӖСЕН ЛОНДОНРИ ПАРАЧӖ

ЛОНДОН, мартăн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тăрăх, мартăн 30-мӗшӗнче Лондон урамӗсенче американецсен Европăна кӗрсе кайма хатӗрленекен çарӗнчи виçӗ пин салтакăн парачӗ пулса иртнӗ.

Лондонра пурăнакан темиçе çӗр пин çын çав иртсе пыракан çарсене хавасланса саламланă.

Халӗ Лондонра вăрçă фончӗ валли укçа пухмалли кампани пырать. Кампани пуçланни эрне те çитмест-ха. Çак кӗске вăхăт хушшинчех вăрçă фончӗ валли 110 миллион кӗренкке стерлинг ытла укçа пухăннă. Ӗнер пулса иртнӗ парад çак асăннă кампанин пайӗ пулса тăнă.

РУМЫНИРИ ÇЫНСЕМ ХĂРАСА ӲКНӖ

ЖЕНЕВА, мартăн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Румыни хаçачӗсенче тухнă статьясем тата Румыни влаçӗсен ӗçӗсем çакна лайăх кăтартса параççӗ: Хӗрлӗ Çар Прут шывӗ патне пырса тухнă хыççăн Румынире çынсем аптраса кайнă, хăраса ӳкнӗ. «Курентул» ятлă хаçат çапла çырать: «Правительство страус политикине тытса пымӗ. Вăл халăхран ӗçсем мӗнле пынине пытарса тăмӗ. Анчах та правительство алла усса ярассипе татăклăн кӗрешӗ». «Универсул» ятлă хаçат халăха «хăрушлăх çине хăрамасăр, куçа хупмасăр пăхма» ӳкӗтлет.

Бухарестри халăха хуларан кăларасси çинчен приказ панă. Румыни çар министрӗ Пантази генерал приказ кăларнă. Çав приказра запасра тăракансене мобилизацилесси çинчен каланă. Приказа лайăхрах вуласан, çакă курăнать: кама ку таранччен юрăхсăр пирки çара илмесӗр хăварнă, халӗ çавсене мобилизацилемелле тунă.

БУХАРЕСТРИ ХАЛĂХА ХУЛАРАН КĂЛАРНИ

АНКАРА, мартăн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Анатоли телеграф агентстви пӗлтернӗ тăрăх, полици Бухарестра пурăнакан кашни çын патнех пӗлтерӳсем ярать. Пӗлтерӳре хуларан тухса кайма хушаççӗ. Полицире халăха хуларан куçарас пирки ятарласа уйрăм бюро тунă. Хулари халăх хăш района тухса каймаллине кăтартса панă.

Румыни çутӗç министерстви кăçал шкулсенче экзаменсем тумалла мар тесе пӗлтернӗ.

ВЕНГРИРЕ ПОЛИТИКАЛЛĂ ПАРТИСЕНЕ САЛАТСА ЯНĂ

ЛОНДОН, мартăн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви Будапештри радиовăн пӗлтерӗвне парать. Унта çапла каланă: Венгрире приказ пичетлесе кăларнă. Çав приказра социал-демократсен партине, ялти пӗчӗк хуçасен партине тата пӗтӗм Венгрири хресченсен союзне салатса яма хушнă.

БОЛГАРИРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИВӖЧЛЕНСЕ ПЫНИ

СТАМБУЛ, мартăн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Болгарири хаçатсенче пӗлтерӳ пичетлесе кăларнă. Пӗлтерӳре Болгари парламенчӗн 5-мӗш сессийӗнче «Вăрттăн ӗçлекенсемпе вӗсен аппӗсен тата вӗсене пытарса усракансемпе пулăшакансен» пурлăхне конфискацилесси пирки закон йышăнни çинчен каланă. Çав законра кăтартса панă тăрăх, «пулăшакансен» шутне правительствăпа кӗрешес тесе хăйсем пурăнакан вырăнтан урăх çӗре куçса кайнă çынсем пурте кӗреççӗ. Кам-кам пурлăхне конфискацилемелли çинчен шалти ӗçсен министерстви список туса парать. Вăл списока облаçсенчи влаçсем полици пухнă сведенисем тăрăх кăтартса панă çынсене кӗртеççӗ. Вара çав çынсен пурлăхне полици конфискацилет.

НИМӖÇСЕМ СОФИЯ ХУЛИНЧИ ПОЧТĂПА ТЕЛЕГРАФА ЙЫШĂННА ТЕСЕ ПӖЛТЕРНИ ÇИНЧЕН

СОФИЯ, мартăн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Болгари телеграф агентстви çапла пӗлтерет: ют çӗршывсенче Германи çарӗсем София хулинчи почтăпа телеграфа йышăннă тесе сарнă хыпарсем тӗрӗс мар, тет.

ГЕРМАНИ АВИАЦИЙӖ АНГЛИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, мартăн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонра çапла пӗлтернӗ: мартăн 28-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле Германи самолечӗсем Хӗвеланăç Англие, Кăнтăр Уэльса, çавăн пекех тата Кăнтăр Англие тата Кăнăтр-Хӗвелтухăç Англин уйрăм пайӗсене вӗçсе çитнӗ. Вӗсем чылай пунктсенче бомбăсем пăрахса сиен кӳнӗ. Вилнисемпе амантнисем пур.

ÇӖНӖ КӖНЕКЕСЕМ

Леонид Агаков. Тăван юнăшăн (Партизан Мурат). Повесть. 144 стр. Хакӗ 5 тенкӗ.

Автор хăйӗн повеçӗнче вăхăтлăха тытса илнӗ совет районӗсенче нимӗçсем мӗнле ашкăннине, хăйсене пăхăнман совет гражданӗсене çакса, персе, тӗрлӗ майсемпе асаплантарса вӗлернине, çаратнисене кăтартса парать. Халăх тарăхăвӗ ӳснӗçем ӳссе пырать. Унта та кунта партизансем отрядсене чăмăртанма тытăнаççӗ. Юлашкинчен халăх Хӗрлӗ Çар чаçӗсемпе пӗрлешсе нимӗçсене хӗвеланăçнелле хăваласа каяççӗ.

Повеçе тепӗр хут юсаса кăларнă. (Малтанхи хут повесть «Илемлӗ литература» альманахра пичетленсе тухнă).

Тӳрлетни

ВКП(б) Чăваш Обкомӗн секретарӗ И. М. Чарыков юлташ Обкомăн XVIII-мӗш пленумӗнче тунă доклад ятне, «Чăваш Коммуни» ӗнерхи номерӗнче пичетлениӗскерне, çапла тӳрлетсе вуламалла: «Çураки тата 1944 çулта вăйлă тыррул туса илес ӗçре республикăри парти организацийӗ умӗнче тăракан задачăсем».

Ответлă редакторăн заместителӗ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителӗн — 4—26, парти пурнăç пайӗн — 3—99,